Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N33 (4602) | *1998 çулхи март (пуш) уйăхĕн 25-мĕшĕ, юнкун* | *Палăртнă хакпа.*

## Шкул хыпарĕсем

### Республикăра тăваттăмĕш вырăн

Мартăн 16-18-мĕшĕсенче шкулта вĕренекенсен "Рынок экономикин никĕсĕсем" предметпа республика Олимпиади пулса иртнĕ. Хулари 4-мĕш номерлĕ вăтам шкулти 11"Б" класра вĕренекен Фаргат Латыпов Олимпиадăна хутшăннă 59 ача хушшинче тăваттăмĕш вырăн йышăннă. Тутарстан Республикин вĕрентӳ Министрĕн приказĕпе килĕшӳллĕн ăна, çаплах çак предметпа вĕрентекен И.Р.Низамова тав тунă.

### Каникулта - Финляндие

Çирĕм ултă вĕренекенпе 7 вĕрентекенрен тăракан ушкăн нумаях пулмасть Финляндие кайнă. Çулçӳреве районти вĕрентӳ пайĕ йĕркеленĕ. Çуркуннехи каникул вăхăтĕнче вĕсем кунти паллă вырăнсемпе паллашĕç. Çулçӳрев ăнăçлă вĕçленсен, вĕрентӳ пайĕ малашне те вĕсене йĕркелеме шутлать.

### Хуçасем 3:0 шутпа çĕнтернĕ

Нумаях пулмасть 4-мĕш номерлĕ шкулти хĕрарăм учительсен волейбол команди хăйĕн спорт залĕнче сахăр завод командипе вылянă. Çак вăйăра хуçасем 3:0 шутпа çĕнтернĕ.

*Степановсем - Зоя Павловнапа Георгий Михайлович - хăйсен пурнăçне яла халаллană. Зоя Павловна тивĕçлĕ канура пулнине пăхмасăр, сысна ферминче вăй хурать. Георгий Михайлович - тракторист. Ĕçчен ашшĕ-амăшĕн ачисем те çамрăклах хресчен ĕçне хăнăхнă. Ывăлĕ, Андрей, ашшĕ пекех, механизатор. Унăн апăшĕ Люба выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен отрасльте ĕçлет, ĕнесем сăвать. Иртнĕ çул Любовь хăйĕн ушкăнĕнчи ĕнесенчен ытти дояркăсенчен ытларах продукци илнĕ. Хальхи вăхăтра Степановсем хуçалăхри тĕрлĕ кооперативсенче вăй хураççĕ, анчах та вĕсене пĕр тĕллев пĕрлештерсе тăрать - хуçалăх, хăйсен Куракъел ялĕ ăнăçлă аталантăр тесе май пур таран тăрăшмалла.*

*Ӳкерчĕкре: кооперативсен "Куракъел" пĕрлешĕвĕн ĕçченĕ Любовь Георгиевна Степанова.*



*Н.Азизован сăнӳкерчĕкĕ.*

## КУН хыççăн КУН

### Кооперативсен ертӳçисем валли

Ял хуçалăх кооперативĕсене йĕркелессипе районта пуçланнă юхăм кăçал тата та анлăланчĕ - хуçалăхсенчен чылайăшĕнче хуçалăх расчечĕпе ĕçлекен кооперативсем йĕркеленĕ. Çĕнĕ пĕрлешӳсене хăй тĕллĕн ĕçлеме çăмăл пулманнине шута илсе, районти ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕ кооперативсен ертӳçисем валли икĕ кунхи вĕренӳ йĕркелерĕ. Вĕсем умĕнче тухса калаçнă специалистсем хуçалăх расчечĕпе чек системине кĕртессин, учетпа отчетлăха тытса пырассин, çĕр тата пурлăх пайĕсемпе ĕçлессин йĕрки çинчен каласа пачĕç.

Çĕр ĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине интенсивлă технологисем, тăкаксене хирĕçле механизм анлă кĕртес, тĕштырăсене акса ӳстерес, выльăхсене пăхас тата апатлантарас, ветеринари услугисем парас ыйтусем тĕлĕшпе тухса калаçнисем те конкретлă та тарăн содержаниллĕччĕ.

Кооперативсен ертӳçисем умĕнче администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев сăмах тухса каларĕ.

Кооперативсен ертӳçисем специалистсене хăйсене кăсăклантаракан ыйтусем пачĕç, пăшăрхантаракан проблемăсене пĕрле сӳтсе яврĕç, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашрĕç.

### Кая юлман-ха

Хуçалăхсенчен нихăшĕнче те ытлашши механизаторсем çук. Çав вăхăтрах нумай çул хушши техникăпа ĕçленĕ хыççăн тĕрлĕ сăлтавсене пула ĕçлеме пăрахнă арçынсем те сахал мар. Халь вара, хирти çурхи ĕçсем çывхарса пынă май, вĕсене вĕрентмелле, удостоверенисем памалла, çакă механизаторсемпе çыхăннă ыйтусене татса пама пулăшĕ, çаплах трактористсен професси ăсталăхне ӳстермелле. Çак тĕллевпе 99-мĕш ПТУра ятарлă курс ĕçлет. Чылай хуçалăхсем кунта хăйсен ĕçченĕсене вĕренме янă ĕнтĕ, ыттисем те кая юлман-ха.

## Çĕнтерӳçе - фотоаппарат

Конкурс пулать



Кашни çыннăн пурнăçĕнче кулăшла самантсем сахал мар пулаççĕ. Пĕрисем çакна сăвăсенче, юрăсенче, ӳкерчĕксенче палăртаççĕ, теприсем вара фотоаппарат пулăшнипе ӳкерсе илме ĕлкĕреççĕ. Юлашки - пысăк искусство. Апрелĕн 1-мĕшĕ - Кулăш кунĕ çывхарнă май, район администрацийĕ çумĕнчи çамрăксен пайĕ "Çамрăк фотограф" конкурс ирттересси çинчен пĕлтерет, унăн тĕп теми кулăшла тĕрлĕ самантсемпе эпизодсене ӳкерсе илесси пулса тăрать. Унта 16 çула çитичченхи çамрăк фотографсем хутшăнма пултараççĕ. Хăварăн ӳкерчĕкĕрсене эсир пирĕн пата апрелĕн 4-мĕшĕччен ярса пама пултаратăр. Конкурса хутшăнма васкăр. Çĕнтерӳçе парне- фотоаппарат кĕтет.

**Çамрăксен пайĕ.**

## Хуçалăхсенче - çулталăк отчечĕсем

# Ĕçпе кăтартмалла...

Нефтебазăн хушма хуçалăхĕнчи çулталăкри отчечĕн пухăвне пуçтарăннисенчен хăшĕпĕри ăна мечĕке пĕр хаптана тапса кĕртмелли вăййа çавăрса яма тĕллев тытнăччĕ куран. Ун пек чухне вара вратарĕ хуçалăх председателĕ пулать. Кунта та акă А.С.Жуковăн залран паракан нумай ыйтусене хуравлама тиврĕ. Çапăçу хирĕнче пĕр салтак кăна вăй мар тенине шута илсен, "вратаре" кун пек чух йывăр пулнине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Чăнах та Александр Семенович пĕччен мар вĕт-ха: иккĕмĕш çул ĕнтĕ вĕсем "Нурлатнефтепродукт" акционер обществипе пĕрле вăй хураççĕ. Çавăнпа та А.С.Жуков тухса калаçнă май хуçалăхри чылай ĕçсене вĕсем пулăшнипе пурнăçланине, чылай агромероприятисене те акционер обществи уйăрса панă укçатенкĕпе ирттернине палăртса хăварчĕ. Анчах çакăн хыççăн та обществăн генеральнăй директорне Р.Ш.Хафизова пуçтарăннисен чылай ыйтăвĕсем çине хуравлама тӳр килчĕ. Тĕслĕхрен, хуçалăхри кулленхи ĕçсене ирттерме нефтебаза ăна 850 миллион тенкĕ (кивĕ укçапа) уйăрса панă. Хăшĕ-пĕрисем "эпир çав укçана курман" теме те хăюлăх çитерчĕç. Анчах та запас пайсем, мăйракаллă шултра выльăх, сыснасем туянна укçана вĕсем алăра тытса курма пултарайман. Ытти хуçалăхсем хĕрӳ ĕççи тапхăрĕнче çунтармалли-сĕрмелли материалсем çуккипе ĕçсĕр тăнă вăхăтра кунта çак йывăрлăхсене пачах та сисменнине тата мĕнле ăнлантарса памалла.

Паллах, темиçе çул хушши пухăнна парăма пĕр çулта тӳлесе татма май çук ĕнтĕ. Экономика йывăрлăхĕсем вĕсенчен те аяккинчен иртсе кайман.

Çакăн пек шанчăклă тĕрек пуррине шута илсен, хуçалăхра иртнĕ çул лайăхрах та ĕçлеме май пулнă. Чăнах та, унчченхи çулпа танлаштарсан, хуçалăх продукци туса илес, хатĕрлес ĕçре ăнăçлăхсем тунă, çав шутра апатлăх тулăпа тата сĕтеклĕ апатсемпе кирлĕ таран тивĕçтернĕ. Анчах та çак кăтартусене, кӳршĕ хуçалăхсеннипе танлаштарсан, кунта мухтанмалли çук тесен те юрать. Ку енĕпе ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн çĕр ĕç пайĕн начальникĕ Н.М.Мусин çак хуçалăхри сахăр кăшманĕн уйĕсем хăçантăр кӳршĕсемшĕн тĕслĕх пулса тăнине аса илтерчĕ. Тăрăшсан, пухтелсем те ĕçлеме пултараççĕ вĕт. Тĕслĕхрен, иртнĕ çул кооперативсене пĕрлешсе хирти çурхи ĕçсене хăйсен вăйĕпех пурнăçланă. Пĕр кооперативăн унччченхи ертӳçин А.С.Лобашовăн сăмахĕсем тăрăх, минераллă удобренисемпе хушса апатлантарнă участоксенче тухăç та пуянрах çитĕннĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес отрасльте те ĕçсем йĕркеленсе кайасса шанма пулать: ӳстерсе çитĕнтерекен тата самăртакан ушкăнсене кăкармасăр усраççĕ, сăвакан ĕнесене усрассине те çĕнĕ технологи çине куçарма хатĕрленеççĕ, пăрусене пăхмалли условисем те палăрмаллах лайăхланнă.

Чи кирли вара, хуçалăхра кооперативсенче ĕçлес текенсем чылай. Нумаях пулмасть кунта çак ыйтупа ятарлă канашлу ирттернĕ.

Кооперативсен тĕп тĕллевĕ - кашни хăйĕн участокĕнче хăй тĕллĕн ĕçлени, çĕр хуçи пулни. Çак пухури калаçу чылайăшне улшăнусем тумалли, малашнехи çинчен шухăшлаттарчĕ пулсан, хуçалăхри ĕçсем лайăхланасса шанăç пур. Лайăх та ытлă-çитлĕ пурăнас тесен, тивĕçлипе тăрăшса ĕçлемелле.

**Р.ГИЛЬМУТДИНОВ.**

## ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:


* Хуçалăхсенче - çулталăк отчечĕсем.
* Соросовски олимпиада.
* Литература страници.
* Спорт. Пĕлтерӳсем.

# Пирĕн Фавзия

***Фавзия Мухамметова Тури Нурлат ялĕнче медсестра пулса вăй хурать. Вăл районта "Манăн ялăм - манăн тăван килĕм", "Тăван çĕр, эпĕ - санăн хĕрарăму" номинацисемпе иртнĕ конкурссен çĕнтерӳçи. Ял çыннисем çак лара-тăра пĕлмен, ырă кăмăллă хĕрарăма хисеплесе çыраççĕ, вăл тăван ял, район ăстăн енчен пуянлантăр тесе вăйне шеллемесĕр тăрăшать. Паян эпир пирĕн вулакансене ун çинчен çырнă заметкăпа паллашма сĕнетпĕр.***

Тури Нурлатра пурăнакансем хăйсен медсестрине хисеплесе, юратса "пирĕн Фавзия", "пирĕн врач" теççĕ. Фавзия Якуповна çирĕм çул ытла ĕнтĕ ял çыннисен сывлăхне тĕрĕслет, сиплет. Тӳрĕ кăмăлпа ĕçленипе, хĕрхенӳллĕ пулнипе кĕске вăхăт хушшинче вăл ял çыннисен хисепне тивĕç пулнă. Профилакторире ĕçленĕ май çынсен сывлăхне упрас тесе вăйне шеллемесĕр тăрăшать. Хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет, пурне те яваплăх туйса пурнăçлать. "Сывă çын кăна хăйне телейлĕ туять, эпĕ вара пурне те телей сунатăп",- тет Фавзия. Талăкăн хăть хăш вăхăтĕнче те вăл чирлĕ çын патĕнче. Пĕрремĕш пулăшу панă хыççăн чирлĕ çын патĕнчен тӳрех тухса каймасть, ăна кăшт та пулин лайăхрах пуласса кĕтет. Чирлĕ çын патĕнче сывăрмасăр мĕн чухлĕ каç ирттернине вăл хăй кăна пĕлет. Миçе çыннăн пурнăçне çăлса хăварма тӳр килнĕ ăна. Çаплах Фавзия чирлĕ çынсене хăйĕн ăшă сăмахĕпе те сывалма пулăшать.



Фавзиян пĕрремĕш пулăшаканĕ - унăн мăшăрĕ Равиль. Çын пурнăçне çăлса хăварас тесе вĕсен хăйсен машини час-часах "васкавлă пулăшу" машини пулса тăрать. Фавзия çыннăн ӳт-пӳне кăна мар, чун-чĕрине те сиплет. Унăн тăван ен, ĕçчен çынсем, юрату, пурнăç çинчен çырнă сăввисене лăпкă вулама май çук. Пултаруллă Фавзия пирĕн ялăн мăнкăмăллăхĕ, эпир унăн сăввисене "Дуслык" хаçатра пичетлессе чăтăмсăррăн кĕтетпĕр. Рамиль Мифтахов композиторпа пĕрле вĕсем "Чияляр" юрă çырнă, халь ăна республикăри пултаруллă артистсем юрлаççĕ, "Нурлатым" юрă район гимнĕ пулса тăчĕ.

Çаплах Фавзия ялти культура çуртĕнче йĕркелекен чылай мероприятисен пуçаруçи пулса тăрать. Çапла, унăн сценарийĕпе "Ăрусен тĕлпулăвĕ", "Кĕмĕл туй", "Улах" каçĕсем, "Киленбике" конкурс ирттернĕ.

Вăл кашнин савăнăçне, хуйхине ăнланать, çав вăхăтрах хăйне кам та пулин кӳрентерсен те ăна илтмĕш пулать.

Мăшăрĕпе Равильпе пĕрле вĕсем виçĕ хĕр пăхса ӳстернĕ: Фиалка, Ландыш тата Роза. Мăшăрĕ шофер пулнипе унăн пурнăçĕн пысăк пайĕ çул çинче иртет, апла пулин те вăл килти хуçалăхшăн лăпкă. Хĕрĕсем те, ашшĕпе амăшĕ пекех, ĕçченскерсем. Вĕсен çуртĕнче яланах йĕркелĕх хуçаланать. Фавзия хăйĕн хĕрĕсене çепĕççĕн "манăн чечексем" тет. Фиалка Хусанти Патшалăх университетĕчи журналистикăн тутар уйрăмĕнчен вĕренсе тухнă, качча кайнă. Равильпе Фавзиян Ильдан мăнукĕ ӳсет. Вăтам хĕрĕ Ландыш - КГПУ студентки, кĕçĕнни Роза пиллĕкмĕш класра вĕренет.

Вĕсен туслă çемйи ялта ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать. Эпир, ял çыннисем, хамăрăн Фавзияпа мăнкăмăллансатпăр, ăна ырă кăмăллă та хĕрхеннӳллĕ пулнăшăн чĕререн тав тăватпăр. Телейлĕ пул, Фавзия!

**Ял çыннисен ятĕнчен**
**Н.ТУХВАТУЛЛИНА**
**учительница.**
**Тури Нурлат ялĕ.**

---

*Лайăх çынсем çинчен*

## Пурнăçне ачасене халаллană

Пирĕн районта Демьяновсен çемйине нумайăшĕ пĕлеççĕ: ашшĕ - Григорий Андреевич нумай çул хушши агроном пулса ĕçленĕ, кайран - МТС директорĕ, амăшĕ - Екатерина Васильевна ачисене пăхнă. Вĕсем пиллĕкĕн. Виçĕ хĕрĕ - Агита, Валентина, Вера - педагогика институчĕсенчен вĕренсе тухнă, ывăлĕ - Юрий техника пĕлĕвĕ илнĕ пулсан та, НГДУн вĕрентӳпе курс комбинатĕнче преподователь пулса ĕçлет. Кĕçĕн хĕрĕ Тамара - апат-çимĕç промышленноçĕнчи инженер. Вĕсем ялсемпе хуласене сапаланса пĕтнĕ. Институт пĕтернĕ хыççăн Пӳлеркӳлĕнчи шкула вырăс чĕлхи вĕрентме килнĕ Валентина Григорьевна çакăнтах юлнă. Ĕç урокĕсене ертсе пыракан учителе Михаил Викторович Лыкова качча тухнă. Валентина Григорьевна Пӳлеркӳлĕнчи ачасене вĕрентме пуçланăранпа 43 (!) çул çитет ĕнтĕ, вĕсенчен 20 çулне директорăн вĕрентӳ тĕлĕшпе ĕçлекен çумĕ пулса вăй хунă. Вăл кунта хĕрĕх çула яхăн директор пулнă Павел Яковлевич Генераловăн чи çывăх пулăшаканĕ пулнă. Пысăк пурнăç шкулĕ иртнĕ, çак çулсем хушшинче педагогикăн паха опычĕ пухăннă, унпа вăл çамрăк учительсене паллаштарать, вĕсен хушшинче хăй вĕрентсе кăларнисем те сахал мар. Валентина Григорьевна пирĕн районта ĕçлекен Л.А.Андреева, Т.Н.Некипелова, З.В.Ильдюшина тата ыттисен ячĕсене те мухтаса асăнать. В.Г.Лыкова хăй "Çутĕç отличникĕ" палла илме тивĕç пулнă, ăна "Ертсе пыракан учитель" ят панă.

- Сăпайлă, çирĕп ыйтакан, принциплă, пултаруллă организатор, - теççĕ ун çинчен ĕçтешĕсем. Вăл хавхаланса ĕçленине, ăсне, хăйĕн учитель ĕçне, ачасене юратнине пĕлекенсем çапла калаççĕ: "Ăна Турă пултарулăх панă".

Валентина Григорьевна шутланă тăрăх, шкул ачана пĕлӳ памалла, унăн пултарулăхне палăртма, ачана хăйĕн вăйне шанма пулăшмалла. Анчах та шкул çемьере паракан воспитание улăштараймасть. Вăл вара пĕр тикĕссĕн пымасть, тата шкул та пăхса çитереймен пулсан, çынна çухатас мар тесе васкавлă мерăсем йышăнмалла. Йывăр ача вăл - ашшĕ-амăшĕн юратăвĕнчен уйăрнă ача, çавна май вăл мăнкăмăллă та чăрсăр ӳссе, каялла тавăрма май çук нумай йăнăшсем тăвать. Тата тепĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ услови. Ачасен обществăшăн усăллă ĕçсене хутшăнмалла, тĕрлĕ интерессем пулмалла.Çавăнпа та вĕсем репетицисене, концертсене, походсене килĕштереççĕ.

... Ку чăнах та çапла пулĕ. Валентина Григорьевна хăй те çак çулсем хушшинче темĕн те шутласа кăларнă, ырă та хаваслă лару-тăрура вăй тата юрату хăватне тытса тăнă.

Сирĕн умăрта пуçа таятпăр, Валентина Григорьевна, сывлăх тата вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

**В.КОМОЛОВ.**

---

# Соросовски олимпиада

***Джордж Сорос. Пултаруллă финансист, аслă филантроп, çапла калаççĕ ун çинчен. Вăл тĕнчери пуян çынсенчен пĕри. Анчах та Сорос тĕнчере хăйĕн пуянлăхĕпе мар, ырă ĕçсем тунипе чапа тухнă. Америкăри финансист тĕрлĕ çĕршывсенчи проектсене пурнăçа кĕртме миллионшар доллар тăкаклать. Юлашки çулсенче вăл Раççее, Тутарстана тимлĕх уйăрать. Вăл йĕркеленĕ ырă ĕçсем тăвакан фонд республикăн вĕрентӳпе сывлăх сыхлавĕн сферине укçине хурать, вĕсем малашне аталанассине çирĕп шанать. Нумаях пулмасть хулари 3-мĕш номерлĕ шкулта Соросовски олимпиада иртрĕ, унта пирĕн район шкулĕсенче вĕренекенсем хутшăнчĕç, çакна лайăх факт тесе хак пама пулать. Аяларах пичетлекен заметкăра çакăн çинчен, çаплах çак шкулта пултаруллă ачасемпе илсе пыракан ĕç çинчен калаçу пырать.***

*Шкул пурнăçĕнчен*

### Пултаруллă çынсем - обществăн тĕп пуянлăхĕ

Çыннăн творчество потенциалне аталантарасси хальхи шкулсен ĕçĕнче яланах тĕп çул-йĕрсенчен пĕри пулнă. Малашнехи эпир шутланинчен те çывăх. Малашлăх вăл - пирĕн ачасем. Пирĕн ачасем хăвăрт ӳсеççĕ. Анчах та хăйсем тĕллĕн тата усăллă ĕçсем туса пурăнма вĕсем эпир халь вĕсен пултарулăхне, талантне аталанма пулăшсан çеç пултарĕç. Уйрăмах пултаруллă ачасене тупса воспитани парасси çĕршывшăн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту: пултаруллă çынсем - обществăн тĕп пуянлăхĕ. Вĕрентӳ аталанăвĕн хальхи тапхăрĕнче уйрăмах талантлă ачасемпе ĕçлессине пысăк тимлĕх уйăрма пуçларĕç. Вăхăтăн çак требованийĕпе килĕшӳллĕн районти кашни шкул, çав шутра пирĕн 3-мĕш номерлĕ шкул-гимнази те пултаруллă тата ăслă ачасемпе ĕçлемелли программа ĕçлесе хатĕрлерĕ.

Пултарулăхăн çутçанталăк панă уйрăм никĕсĕсене палăртма çыннăн нерв системин свойствисене тĕпчемелле, çавăнпа та пирĕн педколлектив шкулти психолог О.М.Ефремова ертсе пынипе психологипе педагогика семинарĕсене ирттерме йышăнчĕ. Эпир пултаруллă ачасемпе ĕçлеме ятарлă комплекслă система тума тăрăшатпăр, кусем - авторсен программисем, альтернативлă предметсем, интеграциленĕ курс йĕркелесе усă курни, факультативсемпе кружоксен ĕçĕсем, ачасем хăйсен пултарулăхне кăтартма май паракан олимпиадăсем, конкурссем, конференцисем. Пултаруллă ачасемпе ĕçлемелли программăпа килĕшӳллĕн пирĕн шкул Соросовски IV олимпиадин II турне ирттерме йышăнчĕ. Соросовски олимпиада - пĕтĕм тĕнчери шкулта вĕренекенсен олимпиади, ăна тăватăмĕш хут ирттереççĕ, кашни хутĕнче нумайрах та нумайрах ача явăçтараççĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх, вăл куçăмсăр туртан пуçланчĕ, икĕ уйăх пычĕ. Задачăсен условийĕсене "Первое сентября" хаçатра пичетленĕччĕ, çавăнпа та вĕсене пурте курма май пулчĕ. Унта Раççейри 3350 шкулти тата ытти çĕршывсенчен 23 пине яхăн ача хутшăннă.

Кăçал пĕрремĕш хут олимпиада программине Мускава каймасăрах унта хутшăнма май паракан II куçăмлă тура кĕртнĕ. Ку питĕ меллĕ, ашшĕ-амăшĕ кашни унта хăй ачине илсе кайма укçа-тенкĕ тупаймасть вĕт-ха. Соросовски олимпиада мĕн парать? Унта ăнăçлăх кăтартни шкулта вĕренекен хăйĕн пултарулăхне çирĕплетни çеç мар, çаплах тĕрĕс тата естественнăй наукăсен енĕпе професси суйласа илме те пулăшать.

Раççейре малта пыракан аслă вĕрентӳ учрежденийĕсенчен хăшĕ-пĕри олимпиадăн юлашки турĕнче вĕренекенсем тунă кăтартусене шута илеççĕ. Соросовски олимпиадин çĕнтерӳçисемпе малти вырăнсене йышăннисем грант илеççĕ, студентсем пулса тăрсан вĕсен Соросовски стипендине илессинче çăмăллăхсем пулĕç. Олимпиада çĕнтерӳçисен учителĕсен вара Соросовски учитель ят илме çăмăллăхсем пулĕç.

Хулари 3-мĕш номерлĕ вăтам шкул бази çинче ирттернĕ олимпиадăна виççĕре яхăн ача хутшăнчĕ. Олимпиадăна хутшăнни шкулта вĕренекенсене Соросовски олимпиада валли ятарлă хатĕрленĕ математикăпа, физикăпа, химипе тата биологипе оригиналлă задачăсене шутланă чухне хăйсен пултарулăхне палăртма май пачĕ.

Олимпиада ирттерме пире пулăшнă тата хăйсен вĕренекенĕсене унта хутшăнма явăçтарнă шкулсене эпир тав тăватпăр. Кусем хулари 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш, 8-мĕш номерлĕ, Селенкĕшри, Кивĕ Чаллăри, Пӳлеркӳлĕнчи шкулсем. Анчах, шел пулин те, районти учительсем вĕренекенсене олимпиадăна хутшăнма явăçтарас ĕçе начартарах илсе пыраççĕ. Кăна вĕренекенсем çакăн пек олимпиада пурри çинчен пĕлменни тата ялти шкулсем унта сахал хутшăнни çирĕплетет.

Олимпиадăна ирттернĕ. Шкулта вĕренекенсен ĕçĕсене Мускава ярса панă, ăнăçлă кăтартусем кĕтмелли çеç юлчĕ. Пирĕн вĕренекенсем хушшинче те "çăлтăрсем" тупăнасса эпир шанатпăр.

**Н.БОБРОВА,**
**3-мĕш номерлĕ шкул-гимнази директорĕн вĕренӳпе воспитани тĕлĕшпе ĕçлекен çумĕ.**
**1998 çулхи март.**

## Вут-çулăм пурнăçа хĕрхенмест

Госпожнадзортан килнĕ хыпарсем пушар вăхăтĕнче çынсем вилнине нумайрах та нумайрах пĕлтереççĕ. Çакĕ питĕ пăшăрхантарать.

Этем вăрçăра е йывăр чирлесе вилни пысăк хуйхă, çапах çакна ăнланма пулать. Тăнăç вăхăтрах этем пушарта аманса инвалида тухни е вилни, е ачасем суранланса юлни калама çук пысăк инкек пулса тăрать. Статистика та савăнтармасть. Çапла, 1997 çулхи ноябрь уйăхĕн вĕçĕ тĕлне Тутарстанта 4338 пушар палăртнă, вĕсенчен - 3301-шĕ пурăнакан вырăнсенче, пушарсенче 174 çын вилнĕ, 100-шĕ аманнă.

Акă пĕр тĕслĕх. Нурлат хулинчи икĕ хутлă çуртăн иккĕмĕш хутĕнчи хваттерте çĕрле пушар тухнă. Хваттерти япаласем çуннă. Пушара сӳнтернĕ вăхăтра пӳлĕмри диван çинче хваттер хуçин виллине тупнă. Вăл 1936 çулта çуралнă. Пушар сăлтавĕ - ӳсĕрле вутпа асăрханусăр пулни. Çакăн пек тĕслĕхсем чылай илсе кăтартма пулать.

Çавăнпа та граждансене пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене тепĕр хут асăнтарас тетпĕр:

- пĕчĕк ачасене çуртра пĕччен ан хăварăр, çунакан газ, электричествăпа ăшăтмалли приборсене ачасене шанса ан хăварăр; приборсене аслисен çеç асăрхаса тăмалла;
- кивĕ электропрводкăпа усă ан курăр, вĕсене шпалерпа ан хуплăр, хăвăр ăсталанă электропредохранительсемпе усă ан курăр;
- харăсах темиçе электроприборпа усă ан курăр;
- маччара, путвалсенче пирус ан туртăр, шăрпăкпа усă ан курăр;
- коридорсене, пусма картлашкисене япаласем ан хурăр;
- газ шăршине туйсан электричество ан çутатăр, пӳлĕме уçăлтарăр, горгазăн авари службине 04 номерлĕ телефонпа чĕнĕр.

Çаксене пурте пурнăçлама пултармалла пек ĕнтĕ, çапах пушарсем тухаççĕ.

Тата. Пушар тухни çинчен чылай чухне кая юлса пĕлтереççĕ. Пушар тухнине сиссен, курсан (тĕтĕм, çуннă шăршă, вут-çулăм) çавăнтах пушар хуралне пĕлтерĕр. Телефонсем: 01, 2-22-72, 5-29-26 е нефтяниксен коммутаторĕ урлă 65-1-01, 65-0-73. Диспетчера урама, çурт, хваттер номерне, мĕн çуннине, васкавлă пулăшу кирлипе кирлĕ маррине, шăнкăравлакан хушаматне, телефон номерне уçăмлă каламалла. Çакă пушарниксене оперативлă ĕçлеме кирлĕ. Çакна астăвăр: пушара сӳнтерессинччен сыхланма çăмăлтарах!

**Т.СОЛОВЬЕВА,**
**73-мĕш пушар пайĕн кĕçĕн инспекторĕ, шалти службăн прапорщикĕ.**

*Улах юррисем*

## Урамăрпа иртсе пынă чухне

Пӳртĕрсен умĕнче, ай, садăр пур,
Хĕлле ешерекен йывăç пур.
Леш вĕçрен ку вĕçе килнĕ чухне
Çиленсе юлакан çынсем пур.

Урамăрпа иртсе пынă чухне
Пăхас килмест тăшман çурчĕ çине.
Пăхмастăм тăшманăн çурчĕ çине,
Куç вылятчĕ кĕленче куçлăх пек.

Вĕрене турахуп - пĕтĕн турашăл
Арланă-арламан хăрăхăнать.
Ай-хай тăшманĕсен сăмахĕсем
Илтнĕ-илтмен чĕрене çураç.

Вăрманта та кашкăр, хирте упа -
Епле ӳстерес чĕчĕ тихине?
Умăмра та усал, хыçра тăшман -
Епле ирттерес çамрăк ĕмĕре?

Учĕсем те шурă, çунисем хура,
Ялан исправник хапхи умĕнче.
Хучĕсем те шурă, çырăвĕ хура
Ялан çыруçăсен аллинче.
Паян капла эпир, ыран тепле:
Хамăр та пĕр Турă аллинче.

**Пухса йĕркелекенĕ**
**Е.ИЛЮШКИНА.**

**СПОРТ • СПОРТ • СПОРТ**

## Иккĕмĕш+тăваттăмĕш =туслăх

Хулари иккĕмĕшпе тăваттăмĕш номерлĕ шкулсем нумай çул хушши туслă пурăнаççĕ, пĕр-пĕрин педагогика опычĕпе паллашса усă кураççĕ.

Вунă çул каярах çеç уçнă тăваттăмĕш шкул иккĕмĕшĕнчен нумай вĕреннĕ. Икĕ коллектив тĕп ĕçрен пушă вăхăтра та час-часах тĕл пулаççĕ. Çапла çак кунсенче хĕрарăмсем хушшинче волейбол ăмăртăвĕсем иртрĕç. Кĕçнерникун 4-мĕш шкулăн спорт залĕнче шăв-шав тăчĕ, куракансем алă çупни, судьясем шăхăрни илтĕнчĕ. Вăйсем пĕр пекчĕ, нихăшĕ те парăнасшăн пулмарĕ, çапах та иккĕмĕш шкул учителĕсем вăйлăрах вылярĕç. Команда çĕнтерни ытларах спорт ветеранĕсенчен А.М.Казаковаран, Т.Т.Сусловаран, А.З.Замалетдиноваран килчĕ. Çапах та тăваттăмĕш шкул спортсменĕсем пуçĕсене усмарĕç, çитес вăхăтра иккĕмĕш шкулта пулакан ăмăртусене лайăхрах хатĕрленсе вĕсем унта çĕнтерме шутлаççĕ. 4-мĕш шкулта спорта юратакансенчен М.В.Морозована, Ф.С.Лукоянована, Е.Ф.Морозована тата ыттисене те асăнма пулать. Икĕ шкулти волейболисткăсем пĕрлештернĕ команда йĕркелеме тата районти ытти спортсменсемпе выляма шутлаççĕ.



**Р.ГИНЯЕВА.**

## Кĕрешӳ

Мартăн 13-мĕшĕнче Социализмла Ĕç Геройĕн Ш.С.Хафизовăн тăван ялĕнче, Аксу районĕнчи Щербеньре 1981 çулта çуралнă тата çамрăкрах арçын ачасем хушшинче наци кĕрешĕвĕн ăмăртăвĕсем иртрĕç, унта пирĕн районти суйласа пухнă команда та хутшăнчĕ.

Çак ăмăртусенче пирĕн ачасем аксусенчен вăйлăрах пулнине кăтартрĕç, çавăнпа та малти вырăнсем пирĕн пулчĕç.

Вăйлă та ăста кĕрешӳçĕсене уйрăм палăртса хăварас килет. Кусем вĕсем И.Ишниязов, И.Давлетшаров, Р.Абдульманов, А.Ашуров, Р.Рахматуллин (пурте Анат Нурлатран), М.Гузаиров, А.Гимранов (ДЮКФП), Э.Ибрагимов, Ф.Файзуллин, И.Мингалимов (Чулпан).

Турнирти абсолютлă паттăр Хафиз Валеев (Анат Нурлат) пулчĕ.

Кĕрешĕве юратакансем мартăн 25-26-мĕшĕсенче ДЮКФПра (хулари стадионра) интереслĕ кĕрешӳсем курма пултараççĕ, унта республикăри яшсем хушшинче мала тухассишĕн зонăри ăмăртусем иртĕç.



**Х.ФАТУЧЕВ.**

## Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсем

Мартăн 8-мĕшĕнче 8-мĕш номерлĕ шкул базиçинче йĕлтĕрпе чупса "Пионерская правда" хаçат парнине илессишĕн районти ăмăртусем иртрĕç.

Пĕрремĕшĕсем пулса хĕрачасем 2 километра чупрĕç. Финиша Марина Макарова (Пухтел) ыттисенчен 4 минут маларах çитрĕ.

Наташа Макарова (4-мĕш номерлĕ шкул) иккĕмĕш вырăна, Лена Есина (Пухтел) виççĕмĕш вырăна йышăнчĕç.

Арçын ачасем 3 километра чупса, вырăнсене çапла пайларĕç: пĕрремĕш вырăна Миша Хурин (Пухтел шкулĕ) йышăнчĕ, иккĕмĕшне - Ильдар Яруллин (8-мĕш номерлĕ шкул), виççĕмĕш вырăна Сергей Изотовпа (4-мĕш номерлĕ шкул) Слава Кулишенко (8-мĕш номерлĕ шкул) хăйсем хушшинче уйăрнă.

Хĕрачасем 3 километра чупрĕç. Кунта малти вырăнсене йышăнакансем виççĕшĕ те 4-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсем пулчĕç. Кусем Юля Дормидонтовапа М.Мутагирова тата О.Питуганова.

Кайран арçын ачасем 5 километрлă дистанцире ăмăртрĕç. Кунта С.Герасимовпа М.Садыков хушшинче çивĕч кĕрешӳ пычĕ. С.Герасимов финиша хăйĕнпе ăмăртаканран 15 çеккунт маларах çитсе пĕрремĕш вырăна тивĕç пулчĕ. Иккĕмĕшĕ пулса М.Садыков (4-мĕш номерлĕ шкул) çитрĕ, виççĕмĕш вырăна вара В.Маликов (4-мĕш номерлĕ шкул) йышăнчĕ. Шел пулин те, хулари 3-мĕш номерлĕ шкул, Кивĕ Чаллăри тата Хуралтăвĕнчи вăтам шкулсен коллективĕсем хутшанмарĕç, вĕсем вара йĕлтĕрпе чупассипе вăйлисем шутланнă.

Якаелĕнчи, Якуркелĕнчи вăтам шкулсенче йĕлтĕр спортне пачах пăрахнă, маларахри çулсенче йĕлтĕрпе чупассине кунта пысăк тимлĕх уйăратчĕç.



Хулари 1, 4-мĕш номерлĕ шкулсен, Пухтелĕнчи вăтам шкул коллективĕсем юлашки çулсенче ăмăртусене активлă хутшăнаççĕ.

**П.КУЗЬМЕНКОВ,**
**ДЮКФП тренерĕ.**

## Пĕлтерӳсем

**"Нурлаттаз" ЭПУра яланлăха ĕçлеме ЛВС тата WYRDONSпа ĕçлесе курнă инженер-программист кирлĕ. Телефон: 5-14-03.**

**Администраци.**

* * *

**УАЗ-31514 "люкс" автомобиль сутăнать. 1997 çулта туса кăларнă, 5 пин километр çӳренĕ. Адрес: Кушкă районĕ, Васильевка ялĕ, Ларкинран ыйтса пĕлмелле.**

**"Нурлат-Октябрь элеваторĕ" акционер обществин акционерĕсен пухăвĕ предприятин клубĕнче 1998 çулхи апрелĕн 8-мĕшĕнче иртет. Адрес: Нурлат хули, Гиматдинов урамĕ, 50-мĕш çурт.**

**Пуху 13.00 сехетре пуçланать. 9.00 сехетре акционерсене регистрацилеме пуçлаççĕ.**

**Пухăвăн кун йĕрки:**

**1. Директорсен Совечĕ тата генеральнăй директорĕ "Нурлат-Октябрь элеваторĕ" акционер обществи финанспа хуçалăх ĕçĕн итогĕсем çинчен отчет тăвасси тата 1998 çулта аталанмалли плансемпе паллаштарасси.**

**2. 1997 çулхи çулталăк отчетне, бухгалтер балансне, тупăшсемпе тăкаксен счечĕсене çирĕплетесси.**

**3. Ревизи комиссин тата аудитор отчечĕсене çирĕплетесси.**

**4. Директорсен Совечĕн составне суйласси.**

**5. Аудиторсене çирĕплетесси.**

**6. 1997 çулшăн дивидендсем тӳлесси.**

**Хăвăрпа пĕрле паспорт, акционерсен представителĕсен вара пухăва хутшăнма ирĕк паракан доверенность пулмалла.**

**Директорсен Совечĕ.**

* * *

**Мускав хулинчи пĕр пӳлĕмлĕ хваттере Нурлат хулинчи çавăн пек хваттерпе улăштаратпăр. 5-42-46 номерлĕ телефонпа 18.00 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**1974 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106 сутатпăр. Телефон: 5-20-79.**

### Аксеновăн Бизнес Шкулĕн Хусанти филиалĕ

***DOS, Nopton, Windows 95, MS Office 97, Word, Excel, 1с бухгалтери компьютер курсне вĕренме йышăнать. Компьютера лайăх пĕлме вĕрентме 10-14 çулхи ачасен ушкăнне пуçтарасси çинчен пĕлтерет.***

***Кăмăл пуррисене хăйсен ĕçĕсем, компьютер вăййисем тата ытти валли вăхăт уйăраççĕ. Ĕç вырăнне ПЭВМ Pentium 166 MMX, СДпа оборудованиленĕ.***

***А4 форматпа хура-шурă ксерокопи тумалли услугăсем паратпăр (пĕр строка 70 пус).***

***Сире эпир 10 сехетрен пуçласа 20 сехетчен кĕтетпĕр!***

***Адрес: Нурлат хули, Школьная урамĕ, "Йăла çурчĕ", 2-мĕш хут. Телефон: 5-37-51.***

* * *

### Аксеновăн Бизнес Шкулĕн Хусанти филиалĕ

***Бухгалтер-экономист, бизнес йĕркелекен ăстаçă специальноçсене вĕренме йышăнать.***

***Студентсене пĕлсе тăма - консультаци ыйтăвĕсемпе 10.00 сехетрен пуçласа 13.00 сехетчен пыма пулать. Адрес: Нурлат хули, Школьная урамĕ, "Йăла çурчĕ", 2-мĕш хут.***

***Телефон: 5-37-51.***

### *М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.*

### *Пирĕн патра кăна!*

***Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сиплене чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!***

***Сипленĕ кун, эрнекунсенче, мартăн 27-мĕшĕнче, апрелĕн 10-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче 11 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.***


**Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.**

**Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.**

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

**ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.**

**ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.**

**Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.**

**Регистрациленĕ номерĕ 34.**

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 865.